# Пĕр ĕҫе те вăхăтлăх пурнăҫламан




*Тĕп суйлав комиссийĕ юнкун ЧР Пуҫлăхĕн суйлавĕн кăтартăвĕсене, Олег Николаев сасăсен 75,63% пухса ҫĕнтернине ҫирĕплетнĕ. Ҫавна май унăн должноҫа официаллă майпа йышăнмалли кăна юлать. Вăрах кĕтмелле пулмĕ – мероприятие авăн уйăхĕн 22-мĕшĕнче ирттерме палăртнă. Вăл Оперăпа балет театрĕнче пулĕ.*

## Питĕ пысăк яваплăх

Ҫакăн ҫинчен юнкун суйлав кăтартăвĕсене халалланă, Наци музейĕнче йĕркеленĕ брифингра ЧР Пуҫлăхĕн тивĕҫĕсене вăхăтлăх пурнăҫлакан **Олег Николаев** пĕлтерчĕ. Брифинг тенĕскер, тĕрĕссипе, самай сумлă пресс-конференциех ҫаврăнчĕ.

Олег Алексеевич хăйĕн ҫĕнтерĕвне чи малтанах питĕ пысăк яваплăх вырăнне хурса йышăннине палăртрĕ. Ҫакă, унăн шухăшĕпе, «вăхăтлăх» статуспа ĕҫленĕ тапхăрта республикăн аталану ҫулĕсене палăртма пултарнин, ҫакна халăх туйнин, ҫавна май ырă улшăнусем пуласса шаннин кăтартăвĕ. Пайăррăн палăртрĕ: ҫичĕ уйăх ытла вăхăтлăх пулнине пăхмасăр пĕр ĕҫе те вăхăтлăх пурнăҫламан. Малалла каймалли ĕҫсене вара республикăн пилĕк ҫуллăх аталану программинче палăртнă. Ҫав шутра – инфратытăм проекчĕсем, монохуласене йывăрлăхран кăлармалли мерăсем. Вĕсен экономикине диверсификацилемелле, ҫакă ҫĕнĕ ĕҫ вырăнĕсем йĕркелемешкĕн пулăшма тивĕҫ.

## Тракторсем кăна-и?

Программăна пурнăҫлас ĕҫе пуҫăннă та ĕнтĕ. Калăпăр, «Трактор завочĕсем» концерн предприятийĕсенче пĕчĕк тата вăтам хăватлă тракторсем туса кăларма пуҫласси. Итали тракторĕсен производствине кунта локализацилеме палăртнă. Сахалтан та ҫĕнĕ 500 ĕҫ вырăнĕ пулмалла. Тепĕр икĕ-виҫĕ ҫултанах ҫулталăкра 10-12 пин трактор кăларасшăн. Ку – Раҫҫей рынокĕ валли кăна. Паллах, экспорта та тĕллев вырăнне хумалла. Ҫакна тӳрре кăларайсан производство калăпăшĕ тата пысăкрах пулĕ.

Пысăк проектсем ҫавăн пекех «Химпрома», Чапаев ячĕллĕ заводра, «Эларăра», ытти предприятире те пур – вĕсене пурнăҫа кĕртес тĕлĕшпе ҫине тăрса ĕҫлемелле. Индустри паркĕсене /хальлĕхе вĕсем республикăра виҫҫĕ/ татах тăвасшăн. Ҫĕнĕ Шупашкарта экономикăн хăвăрт аталанăвĕн территорине йĕркелес тĕлĕшпе ĕҫлеме пуҫланă. Пулас резидентсемпе ĕҫлемелле. Ҫӳллĕ шайри производствăсем кирлĕ – ҫав предприятисем ҫынсене лайăх шалу тӳлеччĕр. Ҫитес ҫулсенче республикăра ҫĕнĕ 7 пин ĕҫ вырăнĕнчен кая мар йĕркелемелле.

## Атăл, Китай…

Туризм тĕлĕшпе те плансем пысăк. Олег Николаев республика Атăл ҫинче вырнаҫнипе туллин усă курмалла тесе шутлать. Шăпах аслă ҫак юхан шывпа Чăваш Енĕн пĕчĕк хулисене те ҫыхăнтарма пулать. Ку хăнасене кăна мар, шалти туризма та пырса тивет. Пĕчĕк хуласенче курмалли, интересли пайтах.

Шăв-шав ҫĕкленĕ «Китай проекчĕ» пирки те ыйту пулчĕ. Ҫав проект – ял хуҫалăх продукцийĕ туса илмеллискер, ăна тирпейлемеллискер. Пăрачкав тата Ҫĕмĕрле районĕсенче пурнăҫланать. Муркаш, Ҫĕрпӳ, Шупашкар районĕсенче пурнăҫа кансене самай шавлаттарчĕ. Олег Николаев иккĕленмест: ҫивĕчлĕх ҫурални ĕҫ-пуҫа хăй еккипе янипе ҫыхăннă. Халĕ Китай енĕ хăй шантарнине пурнăҫламанни сисĕнет. Проектпа смета документацийĕ енĕпе усăмлăх ҫуккинчен тытăнса ҫут ҫанталăка сыхламалли саккуна уяманни таранах. Регион ертӳҫи паян ҫак самантсене сирес енĕпе ĕҫленине, Китай енне палăртнă ĕҫсене туллин пурнăҫлама хистессине ҫирĕплетрĕ.

## Команда улшăнмасть

«Хыпар» корреспонденчĕн «Николаев командипе» ҫыхăннă ыйтăвĕ тĕлĕшпе те тулли хурав пулчĕ. Суйлав иртнине кура Правительство отставкăна каять, анчах ку пысăк улшăнусем пулассине пĕлтермест. Олег Николаев хăйĕн команди йĕркеленсе ҫитнине, ҫĕнĕ Министрсен Кабинечĕ те хальхи йышах пуласси палăртрĕ: «пысăк мар улшăнусем пулма пултарĕҫ» – ҫавă ҫеҫ.

Районсен администрацийĕсен пуҫлăхĕсене улăштарас кăмăллă-и? Ку, ăнлантарчĕ республика ертӳҫи, ЧР Пуҫлăхĕн компетенцийĕ мар, сити-менеджерсене вырăнсенчи депутатсен пухăвĕсем уйăрса лартаҫҫĕ. Тепĕр енчен, администрацисен пуҫлăхĕсен ҫурринчен те ытларах пайĕ улшăннă та ĕнтĕ. Хальтерех уйăрса лартнисем хăйсен срокĕ вĕсленичченех ĕҫлĕҫ, полномочисен вăхăчĕ вĕсленекеннисен шăпине вара вырăнсенчи депутатсем татса парĕҫ – ҫавăнпа хăш-пĕр улшăну пулма пултарĕ.

## Федоров та ФКрах юлать

Тепĕр тема – коронавирусран сыхланмалли вакцинаци. Республикăна вакцинăна илсе килнĕ, анчах вакцинаци пуҫланман-ха. Ҫакна Олег Алексеевич «хушма инструкцисем кĕтнипе» сăлтавларĕ. Никама та ирĕксĕрлесе прививка тумĕҫ.

Калаҫу ерипен политика анине куҫрĕ. ЧР Пуҫлăхĕн суйлавĕнче хăйĕнпе кĕрешнĕ кандидатсем тĕлĕшпе сивлеклĕх туйăнмарĕ. Олег Николаев шухăшĕпе, «эпир пурте республика аталанăвĕшĕн пăшăрханатпăр, тĕллевсем пĕрешкелех – уйрăмлăхĕ ҫав тĕллевсене мĕнлерех ҫул-йĕрпе пурнăҫлассинче кăна». Ҫавна май вăл ытти кандидат программисенче пулнă шухăшсемпе, идейăсемпе усă курма хатĕррине те палăртрĕ. Ҫав идейăсене вăл суйлав умĕнхи дискуссисенчех тишкерсе хаклама тăрăшнă.

Федераци Канашĕнчи представитель улшăнма пултарасси пирки калаҫкалаҫҫĕ те – журналистсем ҫак саманта та усăмлатма ыйтрĕҫ. Олег Алексеевич сенатор пуканне йышăнмашкăн виҫĕ кандидатура пулнине пытармарĕ: Раҫҫей парламенчĕн ҫӳлти палатинче паян ĕҫлекен Николай Федоров, Дума депутачĕ Алена Аршинова тата Раҫҫей Геройĕ Николай Гаврилов. Пайăррăн хушамат асăнмарĕ, ҫапах ăнланмалла тата усăмлăн пĕлтерчĕ: «Сенатор улшăнмасть пуль тетĕп…»

## Парти интересĕсенчен аслăрах

«Хыпар» корреспонденчĕн тепĕр ыйтăвĕ, брифинга вĕҫленĕскер, Олег Николаев республика Пуҫлăхне хăй тĕллĕн кандидата тăрса суйланнипе сăлтавланчĕ: «Эсир «справоросс» пулсах юлатăр-и? Юлатăр тăк – ҫакă, сире, республика Пуҫлăхне, сăмахран, «Пĕрлĕхлĕ Раҫҫей» хуҫаланакан Патшалăх Канашĕпе алла-аллăн ĕҫлеме чăрмантармĕ-и?»

«Эпĕ «Тĕрĕслĕхшĕн тăракан Раҫҫей» партирен кайман, кайма шутламастăп», – терĕ Олег Алексеевич. Анчах республикăн ĕҫ тăвакан влаҫ юппин ертӳҫин, ун шучĕпе, уйрăм парти интересĕсенчен ҫӳллĕрех пулмалла, хăш партире пулнине пăхмасăр Чăваш Енре пурăнакан кашни ҫыншăн ĕҫлемелле. Ҫавăнпа кандидата та партирен мар, хăй тĕллĕн тăратнă – ҫакă тĕрĕс утăм пулнă. Ҫав вăхăтрах саккун кăларакан влаҫ тытăмĕнче темиҫе парти представителĕсем пулни, ун шучĕпе, вырăнлă, усăллă. Ҫакна вăл мобильнăй ҫыхăнури конкурентлăхпа танлаштарчĕ. Калăпăр, хальasăннă сферăра тĕп виҫĕ оператор ĕҫлет. Тăваттăмĕшĕ те тĕпленесшĕн. Ҫакă лайăх. Пĕр оператор кăна ĕҫленĕ тĕк ҫыхăну тарифĕсем хальхинчен чылай пысăкрах пулатчĕҫ.

Партисемпе ҫыхăннă политика лару-тăрăвĕнче те ҫаплах: конкуренци пулмаллах – тавлашура чăнлăх ҫуралĕ. Тĕллевсене те тĕрлĕ партие явăҫтарса сӳтсе явмалла. Ҫав тĕллевсен шутĕнче чи малтанах – республика бюджечĕн кашни тенкине кунта федераци бюджечĕн, уйрăм инвесторсен укҫине илсе килмешкĕн тăкакласси. Ҫав укҫа республикăри пурнăҫа лайăхлатассишĕн ĕҫлетĕр. Ытти парти представителĕсемпе хутшăннă май республикăн Пуҫлăхĕ шăпах ҫакна тĕпе хурĕ.

■ **Николай КОНОВАЛОВ**